Строительсене професси уявĕпе саламлатпăр

# Мирлĕ ĕçе алăран вĕçертме шухăш çук

***Юлашки çулсенче Муркашра, Мăн Сĕнтĕрте, Москакассинче çĕнĕ конструкциллĕ çуртсем çĕкленни ял пурнăçне çĕнĕ шая çĕклет, çынсен культурине ӳстерет. Çакăнта эпир “Хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацийĕ” хупă акционерлă общество ĕçченĕсем пирки ырăпа асăнмасăр иртейместпĕр. Çавăнпа та строительсен уявĕ умĕн эпĕ асăннă акционер обществин генеральнăй директорĕпе, Хура тăпраллă мар зонăри агропромстройăн хисеплĕ строителĕпе Виталий Владимирович Коротниковпа тĕл пулса калаçрăм.***



**Хăйĕн çумĕпе Николай Дмитриевич Макаровпа Виталий Владимирович Коротниковăн (сылтăмри) сӳтсе явмалли нумай.**

**– Виталий Владимирович, строитель ĕçĕн пархатарлăхне шута илсе тата эсир районти сулăмлă организацисенчен пĕри пулнине шутласа Сирĕн патăра çул тытрăм. Хăвăрăн професси кунĕ умĕн кăçалхи ĕçсене пĕтĕмлетсе мĕн калайратăр?**

– Пĕтĕмлетӳсем тăвиччен паян манăн хамăрăн ĕçченсене Строительсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлас килет. Çăмăл мар, анчах ответлă ĕçре вăй хураканскерсем сивве-ăшша пăхмасăрах умри тĕллевсене пурнăçлаççĕ, çĕнĕ çуртсем çĕклеççĕ, ялсене çĕнĕ хăт кĕртеççĕ. Кăçал Раççейре Строительсен кунне официаллă уявлама пуçланăранпа 50 çул. Эпĕ ертсе пыракан строительство организацийĕ вара уçăлнăранпа 47-мĕш çул ĕçлет. Апла эпир – Строительство кунĕн тантăшĕсем. Ку вара пире çулленех уява хаваслăрах ирттерме хушать. Уяв хаваслăхĕ пурнăçланă ĕç калăпăшĕнчен килет те çулленех эпир çак куна ĕçри ӳсĕмсемпе кĕтсе илетпĕр. Акă, кăçал та пĕрремĕш çур çулти ĕç калăпăшне пĕлтĕрхинчен ирттертĕмĕр: 2005 çулта 9729061 тенкĕлĕх ĕç тунă пулсан, кăçал – 10088147 тенкĕлĕх. Уйрăммăн илсен, паян пирĕн строительсем Муркашра нумай хваттерлĕ çурт, “Рассвет” агрофирмăра ĕне сумалли цех, Москакассинчи “Илем” кафене, Москакассинчи ял магазинне, Мăн Сĕнтĕрти универмага, Шатракассинчи ял магазинне, Лантăшри çăкăр пекарнине тунă-юсанă çĕрте ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть Йӳçкассинчи ватăсемпе инвалидсен интернатĕнче 10 вырăнлăх мунчаллă, кĕпе-йĕм çумалли пӳлĕмлĕ, 4 автомашина вырнаçмалăх гаражлă хуçалăх блокне хута ятăмăр, Уйкас Янасалти пĕрлехи практика врач уйрăмне, Муркаш райповĕн столовăйне юсаса пĕтертĕмĕр.

**– Сирĕн строительсем пурнăçлани район çыннисен куçĕ умĕнче. Çак пархатарлă ĕçре палăрнисем пирки уяв умĕн уйрăммăн калани те ытлашши пулас çук.**

– Çапла, организаци ӳсĕмĕ – рядовой ĕçченсен тăрăшулăхĕ. Пурнăç ыйтакан çĕнĕ технологисене çул параканĕсем шăпах вĕсем. Çичĕ хут тар кăларса ĕçлекенсен тăрăшулăхне эпир те куçран вĕçертместпĕр, патшалăх та вĕсем пирки манса каймасть. Уяв умĕн эпир çулленех пысăк чыса тивĕçнĕ хамăр ĕçченсемпе мăнаçланатпăр, вĕсене ыттисем умне тĕслĕхе лартатпăр. Хура тăпраллă мар зонăри агропромстройăн хисеплĕ строителĕ ята тивĕçнĕ Николай Александрович Гусак ( вăл пирĕн организацие чĕрĕк ĕмĕре яхăн ертсе пырса çӳллĕ шая çĕкленине паян та кунта ĕçлекен кашни çын лайăх астăвать), Николай Леонидович Звонков, Елизавета Михайловна Андреева, Петр Трофимович Медунгин, Александр Викторович Суворов, Геннадий Егорович Петров, Венера Анатольевна Золототрубова, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕсем Ефтихий Григорьевич Аргандеев, Михаил Федорович Яндимиркин, ЧР Тава тивĕçлĕ механизаторĕ Захар АлексеевичЯндушкин, “За преобразование нечерноземья РСФСР” медале тивĕçнĕ Венера Анатольевна Золототрубова, “Хисеп палли” орден илнĕ Михаил Федорович Яндимиркинпа Геннадий Егорович Петров, “Ĕç мухтавĕн 3 степень” ордена тивĕçнĕ Анастасия Ивановна Сидюшкинапа Людмила Егоровна Хошкина, Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе чысланнă Валентин Михайлович Ершовпа Зинаида Ефтихеевна Куликова, ертсе пыракан професси ĕçченĕсем хушшинчи Пĕтĕм Раççейри ăмăрту дипломне тивĕçнĕ Людмила Ивановна Яндимирова паян пирĕн патăмăрта ĕçлекен кашни ĕçченшĕн ыра тĕслĕх пулса тăраççĕ. Тав вĕсене тата вĕсемпе танлашас тесе вăй хуракансене.

**Анатолий БЕЛОВ.**



**Эсир сăн ӳкерчĕкре Геннадий Егорович Петров ертсе пыракан бригадăна куратăр.**

**Ĕçре чыс-хисепе тивĕçнĕ бригадир “Моргаушская” МСОри аксакалсенчен пĕри. Кунта вăл 1966 çулта ура ярса пуснă. Килнĕ те кунти пурнăçа хăйĕн пурнăçĕ туса хунă. Малтанах кирпĕч хуракансен пулăшаканĕ пулнăскер, 1967 çулта кирпĕч хуракансен икĕ уйăхлăх курсне пĕтерет те каменщикра ĕçлеме пуçлать. Хыççăн – Совет Çарĕ. Унтан таврăнсан каллех хуçалăхсем хушшинчи строительство организацине. Каярахпа çур çул ытларах хăй тĕллĕн Куйбышева кайса экскаваторщика вĕренсе аякра ĕçлесе МСОри стажа татнисĕр пуçне Геннадий Егорович ĕмĕрĕпех кунта вăй хурать. 1974 çултанпа– кирпĕч хуракансен бригадин бригадирĕ. Вуншар çул пĕрле ĕçлекенсемшĕн те, тин кăна организацине ĕçе килекенсемшĕн те вăл ыра тĕслĕх пулса тăрать.**

Официально

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОНННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**
**РЕШЕНИЕ**
**от 9 августа 2006 года № С-12/2**
**О создании депутатской группы “Единая Россия” в Моргаушском районном Собрании депутатов**

Руководствуясь статьей 24 Устава Моргаушского района,

Собрание депутатов Моргаушского района **р е ш и л о:**

1. Создать депутатскую группу “Единая Россия” в Моргаушском районном Собрании депутатов.
2. Утвердить Положение о депутатском объединении (депутатской группе) “Единая Россия” в Моргаушском районном Собрании депутатов.
3. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на постоянную комиссию по местному самоуправлению, законности, правопорядку и депутатской этике. (Кожанов В.И.)

**Глава Моргаушского района Ю. А. ИВАНОВ.**

---

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ**
**РЕШЕНИЕ**
**09.08.2006г. №С-12/3**
**О внесении изменения в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 03.11.2005 г. № С-2/5 “О введении системы налогообложения в виде единого налога на вмененный доход для отдельных видов деятельности”**

В целях приведения в соответствие перечня торговых точек для обложения единым налогом на вмененный доход для отдельных видов деятельности

РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ **РЕШИЛО:**

1. Внести в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 03.11.2005 г. № С-2/5 “О введении системы налогообложения в виде единого налога на вмененный доход для отдельных видов деятельности” следующее изменение:

В перечне торговых точек к приложению №3 магазин “Стройка” исключить из категории объектов, расположенных на участке трассы “Москва-Казань” и отнести к категории с численностью обслуживаемого населения от 200 до 2000 человек.

2. Настоящее решение вступает в силу с 1 октября 2006 года.

**Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**

---

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОНННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**
**РЕШЕНИЕ**
**от 9 августа 2006 г. № С-12/1**
**О назначении члена избирательной комиссии Моргаушского района**

В соответствии со ст. 22 Федерального Закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации” и ст. 12 Закона Чувашской Республики “О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике” и ст. 12.1 Устава Моргаушского района,

Районное Собрание депутатов **решило**:

Назначить членом избирательной комиссии Моргаушского района с правом решающего голоса Костину Альбину Анатольевну, 1965 года рождения, образование среднее специальное, электромеханика Моргаушского районного узла электросвязи, выдвинутую от Коммунистической партии Российской Федерации.

**Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**

Пресс-конференцирен

# Чăвашсен культурине тĕнче шайĕнче кăтартрĕç

Районти культура ĕçченĕсем хăйсен ĕçне чунтан парăнса малашлăха пысăк утăмсем туни сисĕнет. Культура министерстви ирттерекен тĕрлĕ конкурссемпе фестивальсене, проектсене хутшăнса çитĕнӳсем тăваççĕ. Халăхăн ăс-тăн пуянлăхне ӳстерессине, йăли-йĕркисене упраса хăварассине мала хурса ĕçлеççĕ.

Чăваш Республикинчи журналистсен Союзĕн пресс-центрĕнче августăн 4-мĕшĕнче пресс-конференци пулса иртрĕ. Ăна Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти “Янаш” халăх ансамблĕ Венгри Республикинчи Сегед хулинче пулса иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери XXII ташă фестивальне кайса килнине халалланă. Вĕсем инçе çулри ĕç-хĕле сӳтсе яврĕç. Артистсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсемпе паллаштарчĕç.

Пресс-конференцие Чăваш Республикин Халăх пултарулăх çурчĕн ертӳçи А.Н. Сергеев уçрĕ.

– Сегедри фестивале Польша, Венгри, Румыни, Греци, Турци, Болгари, Чăваш Республикинчи пултарулăх ушкăнĕсем хутшăнчĕç. Чăваш халăхĕ вăл хăй несĕлĕсене яланах асра тытнă, йăли-йĕркисене упранă. Эпир те, вăрăм çула тухнă май, Остер хулинче чарăнса Çеçпĕле пуç тайса, унăн сăввисене вуларăмăр. Муркашри пултарулăх ушкăнĕ Венгри Республикинче чăваш ятне тивĕçлĕ хӳтĕлерĕ. Чăваш ятне, наци культурине çӳллĕ шайра тытса Сегед халăхĕпе туслă çыхăну турĕç. Несĕлсем хушшинчи çыхăнăва çĕнетсе, туслăха çирĕплетсе пыма сире ăнăçу сунатăп.

Çакна палăртса калам-ха, Венгри çамрăкĕсен культура шайĕ самай пысăкки, хăйсене халăх хушшинче тытма пĕлни питĕ тĕлĕнтерчĕ. Пирĕн çамрăксен те вĕсенчен вĕренмелли пур-ха.

Пресс-конференци ĕçне малалла Муркаш район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева тăсрĕ.

– Çак фестивале хутшăнни, чăваш чысне “Янаш” ушкăн хӳтĕлени – Муркашсемшĕн пысăк чыс. “Янаш” халăх ансамблĕ чăннипех хăйĕн пултарулăхне нумай туптарĕ, чăваш йăли-йĕркине упраса хăварассишĕн чылай тăрăшрĕ. Вĕсем асатте-асаннесен чăвашлăх тымарне юрă-ташăсенче упраса çĕнетсе пыраççĕ, халăх çине кăлараççĕ.

Мăн Сĕнтĕрти юрăпа ташă халăх ансамблĕ 1984 çулта йĕркеленнĕ. Унăн йĕркелӳçи Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Мăн Сĕнтĕрти Культура çурчĕн ертӳçи А.И. Захарова. “Янаш” ушкăн халăх ятне 1992 çулта тивĕçнĕ. Унăн художество ертӳçинче Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Р.П. Петров вăй хурать.

Программăна чăваш халăх юрри-ташши, чăваш композиторĕсен юррисем кĕреççĕ. Пултарулăх ушкăнĕ 1992 çулта Тюменьте, 1995 çулта Кемерево облаçĕнче, 1996 çулта Швецире иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери фольклор фестивалĕсенче пулчĕç. Çулсеренех пулса иртекен “Атăлçи çăл куçĕсем” фестивале хутшăнаççĕ. Çавăн пекех районти Акатуй уявĕнче хăйсен пултарулăхĕпе савăнтараççĕ. Ку ушкăнра ятарлă пĕлӳ илнĕ артистсем мар, тĕрлĕ отраслĕсенче вăй хураканесем, вĕсем ял çыннисен пурнăçне илемлетес тесе нумай тăрăшаççĕ.

Фестивальсем, смотр-конкурссем ирттерни пултарулăх ушкăнĕсен ăсталăхне ӳстерме нумай пулăшать. Районта халăх ятне илнĕ ушкăнсем вунпĕрĕн. Вĕсем пурте тивĕçлĕ шайра ĕçлесе пыраççĕ.

Инçе çула кайса килме Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов нумай вăй хучĕ. Пултарулăх ушкăнне пулăшса, хавхалантарса пынăшăн ăна пысăк тав. Çавнашкалах тав сăмахĕ ЧР Культура министерствине. Спонсорсене те ятран асăнса хăварас килет:, П.П. Давыдов (“Ударник” хуçалăх ертӳçи), В.В. Коротников (МСО “Моргаушская” ертӳçи), П.Т. Терентьев (предприниматель), Н.Б. Царев (предприниматель), Л.В. Николаева (предприниматель), Л.Д. Дмитриев (“Моргаушавтотехсервис” ертӳçи), В.А. Калинин (сĕт завочĕн ертӳçи), Е.Н. Субботин (Муркаш пасарĕн ертӳçи), М.В. Васильев (предприниматель), Л.П. Майкова, Мăн Сĕнтĕр райпо ертӳçи, Б.В. Андреев, Муркаш райпо ертӳçи. Çак çитĕнӳре вĕсен тӳпи те пысăк, тавах вĕсене.

Историрен илсен, Венгрипе чăваш халăхĕн пĕрпеклĕхĕ те пур. Ку вăл тĕрĕсенче те, сăмахсен пĕр евĕрлĕхĕнче те курăнать. Йăли-йĕркисем, культури питĕ çывăх. Çавăнпа та икĕ халăх тачă çыхăнура тесе калас килет.

Р.П. Петров, “Янаш” ушкăн ертӳçи:

“Янаш” ушкăн 33 çынна пĕрлештерет, 12 ташăçă, ыттисем юрлакансем. Программа пĕр сехет те 20 минута тăсăлать. Пултарулăх ушкăнĕ 2008 çулта пулса иртекен фестивале хутшăнма чĕннĕ йыхравпа, медальэмблемăпа, Дипломпа тата хаклă парнепе тавăрнчĕ”, - тесе пĕлтерчĕ.

Пресс-конференцие хутшăннă тепĕр ушкăн вăл – Етĕрне районĕнчи “Вирьял” фольклор ансамблĕ, ертӳçи Л.А. Иванов. Вĕсем Дагестан Республикине кĕрекен Дербен хулинчи Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш ташă фестивальне кайса килчĕç. Паянхи кун Кавказ халăхне лăпкă мар теме хăнăхнă эпир. Апла пулин те Етĕрнесем сакăр çынран тăракан ушкăнпа тăвата куна тăсăлнă çул çӳреве кайса килме шикленмен. Кунта та чăваш йăли-йĕркине, юрри-ташшине, тĕррине хапăл туса кĕтсе илнĕ.

Çакăн пек фестивальсене хутшăнни халăхсем хушшинчи туслăха хаклама пулăшать. Несĕлсен йăли-йĕркине, культурине хисеплеме вĕрентет. Пултарулăх ушкăнĕсем халăхăн канăвне илемлĕрех, усăллăрах йĕркелеме пулăшаççĕ.

Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ пулнине тĕпе хурса культура ĕçченĕсем ку тĕлĕшпе пысăк утăмсем туса пыраççĕ. Наци культури çине ытларах тимлĕх уйăрни сисĕнет. Паянхи пурнăçра культура вучахĕсене сӳнме паманнинче, чăвашлăха çӳле хунинче ытларах вĕсен тӳпи.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**



**Сăн ӳкерчĕкре: “Янаш” ушкăн Венгрире.**